Кёрхи сёртме сухине лайăх пахалăхпа тата вăхăтра туса иртерни ситес сулхи вăйлă тырпулăнăн кёрешеç ёçре пысăк вырăн йышăнса тăни пуринён те палла. Анчах та çав ёç чăтма çук кайă йулса пыни мёнрен килет-ха? Тёрех каламалă, районсенчи парти, совет тата сёрёç организацийёсем, çавăн пекех ку тараннчен Сёрёç Халăх Комиссарьчё йёнчен те çав ёç тавра колхозниксене мобилизацилени, çав ёçе оперативлă йёртсе пыни пулман. Чылай районсенче кёрхи сёртме сухи тăвас ёçре трактăрсемпе усă курмай, чылай колхозсенчё лăшасемпе те ёçлеме тухман. Çавна май вара кёрхи сёртме тăвас ёç республикăра пит кайă йулчё.

Ёç кайă йулнă пулин те плана тултармалах. Çак куншенче çăвăр сем те пулчёç, ку вăл ёçе те çамăлтатăк. Кашни машина-трактăрлă станци кашни трактăра, кашни колхоз пётём лаша вăйне уйă кăларса кёрхи сёртме планне çитес 4–5 кун хушшинчех тултарса çитермелех.

Чăваш АССР Сёрёç Халăх Комиссарё С. Коротков йулташ кёрхи сёртме планне октябёрён 5-мёшне тултарса çитермелле тесе катартса сёрёç пайёсемпе МТ Станцисене уйрăм телеграмма йăнă. МТС директорёсене трактăрсемпе кашни кун мён чухлё ёçлемелине катартса график тума хушнă. Çавăнпа пёрлех районсенчи сёрёç пайёсенчен тата МТС работникёсене колхозсене сынсем йарса кёрхи сёртме планне тултарас ёçе колхозниксене мобилизацилеме хушнă.

Кёрхи сёртме сухине туса çитерме шутлă кунсем йулчёç. Кашни район, кашни колхоз, бригадă кёрхи сёртме планне тултарма тивёçлё.

Выльăх-чёрлёх ёрчетекенсен республикăри канашлăвё

Сентябёрён 28-мёшёнче, Канаш хулинче выльăх-чёрлёх ёрчетекенсен республикăри канашлăвё пулса иртрё. Канашлăва районсенчи ялă зоотехниксем, ветврачсем, райсёрёç пайён выльăх-чёрлёх секторёрён пуçлăхёсем (17 районран пётёмне 67 сын) пухăнă.

Канашлура выльăх-чёрлёх ёрчетёс тёлёпне социализмăлă ăмăрту мёнле сараласа пыни çинчен, выльăх-чёрлёх ёрчетмели государствăпа плане пурнăçа кёртсе пыни çинчен, выльăхсене хёл каçарма мёнле хатёрленни çинчен Сёрпÿ, Канаш, Патăрйел, Тăвай, Ишлей районёсен отчочёсем пулчёç. Çав асăннă районсенче выльăх-чёрлёх ёрчетес тёлёпне социализмăлă ăмăрту сителёксёр сарăлса пырат. Государствăпа планне пурнăçа кёртсе пымасçё. Çулпуç Сталин йулташ партин 17-мёш съезденче: „Выльăх-чёрлёх ёрчетес ёçе пирён пётём партин, пётём работниксен, партире тăракансен те, партире тăмавнисен те хăйсен аллине илмеле, выльăх-чёрлёх ёрчетес задачă халăх вăхăтра—пайăн ăнăçлăн пурнăçа кёртсе çитерне тёш тырпул пыйтăвё ёнер мёнле малта тăна пекех—чи малти вырăнта тăрат", тесе катартса хăварнине чылай районсенче ку тарана çитсе те ăнланса илеймен.

Партипе правительствăн колхозниксене выльăх-чёрлёх ёрчетме пысăк пулăшу парасçё. Çав вăхăтрах Сёрпÿ районёнче ёнесёр хуçалăхсем 890 хуçалăх шутланасçё. Вёсене ёне выльăхсем туйăнтарас пирки районри организацисем сителёксёр ёçлесçё, государствăпа панă укçа-тенкёне йёркелё усă курмасçё.

Выльăх-чёрлёхсене лайăх хёл каçарас ёçре чи кирли—вăл ăшă витесемне апат сителёксё хатёрлеви-пулат. Анчах, нумай районсенче выльăхсёне хёл каçарма хатёрленесси те йăпах пырат. Витесем тума государствă кивçен панă укçа-тенкёпе те сителёкле усă курмасçё. Тăвай районёнчи колхозсене витесем тума государствă 29 пин тенкё кивçен панă пулнă. Пайăнхи кун витесем тунă çёрте 17 пин тенкё çеç усă курнă. Акă, сăмахран, „Куçмет" колхоз лаша витине 1935 султанăна тăват, хăçан тусена пётересси хăй те палла мар. „ЧувашЦИК" колхозăн 22 лаша вăлăйи вите çук. Канаш районёнче 23 колхозра кана витесене йусанă.

Чылай районсенче выльăх чёрлёх чиперне пит сителёксёр кёрешеççё. Сёрпÿ районёнче колхозсенчи сысна фермисенче 9 уйăх хушшинче 14 процент таран сысна çуйисем вилнё. Пёр Чапайён ячёпе тăракан колхозра çуллахи вăхăтра 201 пуç сысна вилнё. Патăрйел тата Ишлей районёсенче те выльăхсем нумай вилнё. Сăкăри (Патăрйел р.) колхозăн сысна ферми пуçлăхёсем ç-нтăбёр уйăхёнче пурё 4 хуç улшăннă. Сысна ёçкеле йёркеле пăхмасçё. Çавна пула та фермăра 200 сысна вилнё. Ишлей районёнче, районёне илсен, пăрусем 10 процент, сысна—10, сурăксем 20 процент вилнё. Паллах, районсенчи сёрёç пайёсене ёçлекенсем, ветврачсем выльăх-чёрлёх чирёсемпе кёрешес ёçе начар йёркеленё.

Канашлура туса калаканскем нумай пулчёç Весем пурте йышăла выльăх чёрлёхпён пыракан социализмăлă ăмăртăва хутшăнассипе выльăхсене хёл каçарма хатёрленесси районсенче сителёксёр пынине палăртрёç.

М. Никăвлёв.

Харькăври бисквит хапăкёнче йулашки вăхăтра 7 стахановёна сочуствующийсем группине илнё, вёсем хушшинче кадрти вата рабочи эксперимент цехён мастарёсе стахановецсем Ф. Ф. Саум та пур. Унăн цехё ийулă программине 289 процент тултарнă.

УКЁРЧЁК СИНЧЁ: партком секретарё Т. Н. Олейниченко (сулахайра) сочуствующийсем Ф. Ф. Саум йулташпа ПСК(б)П уставё çинчен калаçать.

С. Федăмăн фото-укерчёкё (Сёйуфото)

„Спутник агитатора" журнала вулаканскен конференцийё

ПАТĂРЙЕЛ. (Хăмăр корр.). Çак куншенче кунта „Спутник агитатора" журнала вулаканскен районри конференцийё пулса иртрё. Конференцине 50 çын ытла агитатăрсем пухăнчёç.

Малтанхи шутупа „Спутник агитатора" журналпа усă курасси çинчен парти райкомён иккёмёш секретарё Антонов йул. доклад туса панё. Иккёмёш шутупа конференци агитатăрсен халиччехи ёçёсеммпе малашнехи задачисем çинчен сутеçйăврё. Агитатăрсем тухса каласа хăйсен опытсемпе пёр-пёрне паллаштарчёç. Неркеç йăлсовётёнчи агитатăрсем ССРС Верховнăй Совечён Иккёмёш çеççийё йышăннă саккунсене тёплён аланлатарса парасçё. Çеççи государствă бюджечё çинчен йышăннă саккуна массăсене аилăн-аланлатарса пани укçа-тенкё пухас плана тултарма вăйлăн пулăшнă. Йăлсовечё виссёмёш квартăлта укçа-тенкё пухас плана сентябрён 11-мёшё тёлне 114,6 процент тултарнă.

НИК. ПУШКИН.

Отчотпа суйлав умён

КАНАШ. ПСÇЛКС Тёп Комитечё комсомол комитечёсен, комсоргсен отчотпа суйлавне иртересси çинчен йышăннă хыççăн, Киве Ахăртри комсомол пуçламёш организацин комсомол суйлавне хатёрленме пуçларё.

Халё комсомолёсем суйлав инструкцине вёренеççё. Инструкцине вёренме икё занăти туса иртернё.

Комсомолёсем сойузра тăван çамрăксем хушшинче ёçлессине вăйлатсах пыраççё. Политшкулăн занăтийёсем йёркеле пулса иртеççё. Игнатйёв В., Платонăв Й. тата Кудрйавцев И. комсомолёсем вёренме йёркелё сÿреççё.

Арк. Кириллăв—Кимек.

Комсомол 20 çул тултарнă тёле

Шăхасанти вăтам шкул сумёнчи комсомол комитечё ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйăва тата комсомол организацийсенчи суйлава хатёрленес ёçе аналăнах пуçарса йăвё. Вёренме пуçланăранпа комсомолёсен тата сойузра тăван çамрăксен перлешÿлё пухăве икё хут пуçса иртрё. Икё пухăвё те ленинла-сталинла комсомол 20 çул тултарна уйăва хатёрленесси çинчен пулчё. Перлешÿлё пухура комсомолсем „отличнă" вёренме самах парса Анат Кипечри вăтам шкулта вёренекен комсомолёсене ăмăртăва чёнчёç. Комсомолёсем кашнийех комсомолец маррисене, программăна устава вёрентесе, комсомола кёртес тёлёпне ёçлеме самах панчёç.

Комсомолёсем хăйсен политикала пёлёвне ÿстерме, политграмота тата ССРС историне вёренме икё кружок организацилене. Халё вёсем кружокёсене йёркелё сÿреççё. Икё кружокё те ёçе пуçăннă. Кружокёсемсёр пуçне тата пионерсем хушшинче те тёрлёрен кружокёсем организацилене.

Учительсемпе вёренекенсем хушшинче тёрлёрен сыхлăх значокёсен нормисене парас ёçе пуçарса йăпа. Нумайăшне вёренекенсем ку значокёсен нормисене иртнё вёренÿ суйлёчех пани. „ГСО" значокё вăлăйи иртнё вёренÿ суйлёчех кашни ачаран 1 тенкё те 90 пус укçа пухăнчё, анчах та шкул директорё В. Е. Никаков укçине хăйён аллинчех тытса усрат-ха...

Шкулта кашни класрах стена хаçатёсем калăрма йышăнчёç. Чăвал праçник кануне вечёрта, „Комсомол граждани вăрçинче" йăтăлă доклад пулат. Çамрăксем кашнийех вечёра хатёрленеççё.

Г. ЛУКИН.

Тепёр хут Куславкка комбиначё çиҥчен

(Хăмăр корреспондентран)

Куславкка комбиначё хăйён кăçалхи пёрремёш çурçулти производствă планне 69,2 процент тултарнă. Иккёмёш çурçулăхра та комбинат хăйён ёçне начар тёслёхсемпе пуçларё. Йăнăрне плана 72 процент, августра—88,5 процент тултарчё. Сентябёрте çуруйăхри плана пётёмпех тултарна. Çапла вара комбинатăн ёçё кашни уйăхрах йусанса пынă пек курăнат. Анла пулин те комбинат ёçёнче „производствăлă йёркесёрлёхсем" нумай.

Мёнле „йёркесёрлёхсем-ха" вёсем? Комбинат хăйён продукцине комплектлă кăлармасть. Комплектсёрлăх кашни уйăхрах ÿссе пырат. Августăн 1-мёш тёлне комплектлă мар продукци 710 кубла метр кăларнă пулсан, сентябёрён 1-мёшне 978 кубла метра çитнё. Çакна пула комбинат пысăк убыткă тÿсет. Кăларнă продукци комплектлă мар пирки заказчиксем комбинатран 20 пин тенкё укçа пыраса илнё тата 70 пин тенкё пырасçё.

Туса кăларнă продукци складсенче тата унăн тулашёнче тирпейсёр выртат. Чукунçун паракан вакунсем çине продукцине вăхăтра тийемеççё. Кашни вакун комбинатра 3 сехетрен ытла мар тамала, анчах кунта 10—11 сехет тăрасçё. Комбинатăн шалти транспёрчё те йăпăхса кайнă.

Комбинатра тÿçалăхла расчота çирёп ура çине лартман. Ёçшён никам та ответ тытмасть, пур çёрте те обезличка, ответсёрлăх. Час-часах пёр-пёр заказ тума хатёрленё продукцине урăх ёçе йăпасçё. Çирёп графиксем тăрах ёçлемеççё, час-часах пăсасçё. Комбинат директорё, çавăн пекех цехсен начальникесем, хăйсен ăйăпёсене пёр-пёрин çине йăвантарасçё, ёçре пёр-пёрине пулăшни, лайăх пуçарусене сарса пыни çук.

Комбинатăн йăвăç сителёксёр. Йăвăç кирлинчен 52 процент кăна хатёрленё. Унăн пахалăхё начар. Пырăсеннăн кабинатра тăрăшмасçё. Стахановецсене ёçлеме сителёклё таран условин туса паман. Хăма çуракăн цехри рабочисем вăхăтра йăвăç паман пирки тата пачкăсене вăхăтра хăйраса лартман пирки кашни кунах 1—1,5 сехетшер ёçлемеçёр тăрасçё. Çавăн пекех йăвăç касакан цехра та.

Комбинатра çур пине йăхăн çёнё рабочисем ёçлесçё. Вёсене ёç техникине вёрентессине лайăх йёркелемен. Хăма çуракан цехра 25 рабочи, йăвăç каскалакан цехра 40 рабочи хăйсен нормисене те тултараймасçё. Инкек-синкексем ÿссех пырасçё. Брак та ÿсет. Ана пула комбинат 30 пин тенкё убыткă тÿсет. Производствăпа планне тултарса пыман пулин те, комбинат ёçукçи фондине 250 пин тенкё штлашни пётерне.

Комбинатра плана 200—300 процент тултарса ёçлекен стахановецсем сахал мар (Колбасав, Носковă, Пермакова, Грузднёва, Новикăва, Першакав т. ыт. те), анчах вёсен опычёсемпе ытти рабочисене налаштарасçё, ёçлеме вёрентмеççё.

Инженерла-техникла работниксем вăлăн те ёçлеме лайăх условисем туса паман. Кунта кадрсене салатса тарасçё. Йăвăç касакан цехри инструктăр, пилотав Директорăвăн, вăй паракан станцири машинис Кондратьёв, инженер Маленкин йулташсем ёçрен тухса кайнă. Йăвăç касакалакан цехри технорук Йăкимăв, комбинатăн аслă механикё Морозав, автомеханик Данилăв йулташсем те комбинатран урăх çёре кайма шутласçё. Нумайăх пулмасть трестран икё çамрăк инженерсем-комсомолецсем (арăмёпе упăшки) килнё. Вёсене комбинат директорё Никитин йулташ, „инженер тёсё çук" тесе, йышăнман. Вёсем халё „Заря" савăтра (Тутар республикё) инженерта ёçлеççё.

Кунти руководительсем „позицине" йăлнама йăвăр. Темшён ку тараннчен те робочисен поçолăкне водопровод хума панă 20 пин тенкё укçапа усă курмасçё. Çавăн пекех Волышка çырман çыранне çирёплетме панă 7 пин тенкё укçа та ахалех выртат. Рабочисем пуранакăн çуртсене йусасçи йăпах пырат. Çуртсенчи 183 кăмакаран 38-шне çеç йусана. Шахматла çуртра пурăнма канăçлă мар, ăна ахалех йусамала, унсăран инкек пулма пултарат. Çуртсен чÿречисем çемёрёлсе пётнё.

Комбинат пысăк промырва. Тÿрех каламала, комбинат директорё Никитин йулташ халăх ташманёсен сăтăрла ёçёсен йулташёсене пётерес ёçе большевикла йёртсе пымасть. Вăл ытла та лăпкă çын. Парти, комсомол тата профсойуз организацисем те партилё-массăла ёçе тивёçлипе туса пымасçё. Икё кунта пёр çут кино пулать те, савăтри клубра урăх нумён те çук.

Халăх Комиссарёсен Совечён тата парти Обкомён комбината халех инкле пулăшу памала.

П. Русин. М. Никămăв.

Ытларах çитёнÿ тăвассишён

Шупашкарти строительствăра Блохин йулташ йёртсе пыракан плотниксен бригади йулашкин кунсенче тата лайăхрах ёçлеме пуçларёç. Бригадă сентябрён 20-мёшне 25-мёш хушшинчи плана 268 процент тултарнă пуласан, халăхи вăхăтра 270 — 280-шар процент тултарса пырат.

Октябёр уйăвне хатёрленё май ытти бригадăсем те чылайах лайăх ёçлеме пуçларёç Ăмăрту сарăлсах пырат. Акă кантăк лартакан Свечков йулташ сентябёрён 16-мёшне 23-мёш хушшинче кашни кунах плана—299 процент тултарса ёçленё. Халё те çавăнтан кайа мар тултарса пырат.

В. Дмитриёв.

Куçма Çергейёв

ЙУЛТАШ

(КАЛАВ)

Чăн-и чăн мар-и ку хыпар, ёнесенес килмест ăна пёрре те. Телеграммăрн сăмахсем çине пăхсанах куçсем тёкёмленсе кайăççё. Ку сăмахсем пётём кăмăла, чуна çÿçентеррççё. Павăл 10—12 сăмахра çакăн пек-çăруша хыпар пёлтерме май пуррине пурăçра пёрремёш хут курат. Ун пурнăçёнче хурлёхла страницăсем сахал мар пулаканă пулё, çапах та нихăçан та вăл çав терийех чуйтан хуçăласа ÿкмек.

Çук, ёненёçе çук ку хыпара. Ыйтăнмасть ăна çамрăк ас-тăн. Телеграммăна вуланă семён ăшра ку усал хыпара вăйкка хăвалăкан ирёçле шухăш çуралат. Ală çырăва тытма та пултараймасть. Куçсем малала пăхма тăрăшасçё. Анчах ăпăлăсене пёр-пёринчен уйăрса илеймёççё вёсем. Тарасçё умри ăпăласем куçсенчен, ăйён-çийён сăвăрăса йёркеленсе кайасçё, çухалёçё.

Мён пулчё? Мёнле çыру ку? Àçта телеграмма? Алсем каллех шурă хут листине хыпашласа тусаççё. Кирлё мар пулăма, вуласси те çав-сăмахсемех. Вёсене курсан, куçсем штлёрех шыйăнма тытмасçё. Пыра тем ларăп пек-туйăнат, кăкăра йăвăр. Ăшра пушă, тем çукă унта, тăпăлче хыттăн темёскер, çÿнчё „ёмёр" текен хисеплеми пулчёç, йăлашкинчен кашни кунах ÿпкелешме, вăрçма тытăнчёç. Амăшё ăна сăлтавсăрах вăрçат. Николай çеç амăшё хÿтăнче ним сăмахсăр пурăнат. Амăшё ăна вăрçма мар, Павăлран вăрттăн уйрăм апат ситерет, килти, питёрех тухтăрре ăна тăхăнтарат. Павăл, çакна пётёмпех пелеçеккер, Николайăна та, ăмăсăри амăшне те, йулашкинчен, хăйён хутне кёмеллён, ашшёне те курăмăн пулат. Вăл пёчёккёнех килтен йÿтшăнат, йăваткуна шкулта ёç йулташёсем патёнче иртерет. Николай унпа каласа тăрас пулсан, вăл чёнмест, пуçне чиксе айăккала пăрăнат.

Перрешинче ăна хăйар çилёле ămăшё кёлетё купса хурат. Унтан ăна Николай хăтарат. Çакăн хыççăн вёсем пёр-пёрне хытă пуратса пăрахса йăлалăхах туслашса кайăççё. Вёсем пёрле иртен пуçласа каччен вăрманта, аташса çÿреççё, выльăх ситерме кайăççё, хёлле иккёш те шкулта вёренеççё. Николай, асларăхсёр, 5-мёш класра, Павăл 2-мёш класра вёренет. Вёсен йăратуне амăсăри амăшё те пёчёккёнех хăнăхса çитет, пурăнма çемёнчен ăна та хăйённе пёрле масар çине илсе кайма ÿкётлере. Унтан, ерне иртсенех, йулташёсемне пёрле çурăн шыпăа выльăма тухрё, амăшё пёчёккёнех астăнёнчи тухса пычё.

Çулла, ёçе тухас умён, Павăла пёлтермесёр-тумасăр ашшё иккёмёш хут вăлăнчё. Килте икё çын хăйсенчен тăвăн мар амăшё тата унăн шывлё. Кун хыççăн Павăлăн пурнăç хăйăрт ушăлчё. Ăна кидте çёсем хăклисемех марччё, инчах та вёсем ашшёне амăшне темён чухлё савăнаç кÿретчёç. Павăл вара Николай килсен лара-тăра та пёлместчё, ушăн, халиччен ниçта тухса курмăн 16 çулти ачашăн, хула кучченеçёсем темрен те хăк лаччё. Николай станцăран çеç кенекесем илсе килес пулсан, Павăл вёсене çеç çывăрмасăр вуласа тухатчё.

Çапла иртрё ачалăх Вёсем икçёшё те туллинăр вăтам шкул пётёрчёç. Ÿсрёç, çитёнчёç.

Иртнё кёркунне ёçре пиççе вăй питти çын пулнă Николайăна призыва пыма повестка килсе пачёç.

— Иäёç ши, Павлушă, аç—терё Николай ал мускăлёсене тёрёслесе.—Ех, кайасчё Хёрлё Çара!

Часах вăл, айăнтă çын пек хёрелсе, çемёнче хăйёне Хёрлё Çара илнё çинчен пёлтерчё. Ун ёмёчё тулчё. Савăнăçне ниçта выркастарма пёлмесёр, вăл ашшёсăр ташлама пикенчё, йулташёсене пухрё, шавла-вечёр иртерчё...

Акă хаç çак хаваслă сумрăк тёнчере çук. Àçта вăл хаç? Кам велерне пултарнă ăна хёвел ашшинче тулаç çу куненчех! Вăл инвё, акăлёслё пулма пултараймасть. Ала çыру, ... çёршыв чиккине сыхланă чух паттăрла вилёмне вилни çинчен хурланса пёлтеретпёр", — тесе çырат погранзаставă начальникё. Ал чётрет, куссем алчăраса кайăççё. Вăл вилнё...

Павăл шухăшпа та пулни Николай мёнле вилнине таврăçра илме тăрăшат. Унтан ниççан та пулман пулин те, вăл куç умёнче вёçёмсёр часăлса выртакан чикке курат...

Пётём шăмшакпа кÿлёнсе шухăшланăран пите тар танса тухат. Павăл, алтутрине лачкам тара ÿкнё самкине шăлса илет те, шухăшсен йёркине тупас тесе, тулала тухат. Çур сехете йăвăн вăл пахчари улмуççисен айёнче хăй тёлён шухăшласа ларат.

Çук, Николай çинчен хумханмасăр, чунтан пăшăрханмасăр шухăшлама çук. Çак сатри кашни самрăк йăвăç ăна аса илтерет. Иккёшё лартнă вёсене, шăварнă, çеткерне. Йепле вёсем, паркана ăнăскерсем, ситённе йăвăçсен хушшине, хёвел патнеле, иртекеле турттăнаççё. Николай та пурăнăç патнеле çапла харçăрăн турттăнатчё. Çук, кураймарё мёскён тенёр хутчен çак сата, çийёмерё хёл лартнă йăнăçсен улмине.

Чÿречерен амăшён хёрлё тутри курăнчё. Амăшё ăна каçăн ăнат тума чёнчё.

— Йÿрат, —терё Павăл йăпкă сасăпа.

Апат çине вăл ашшёне амăшё сётел хушшинчи тухас умён çеç кёчё. Амăшё, ăна йăланăн пек чёрё мирине асăрхаса, сăмах чёнчё, йăшкана йÿрма кирлё мар-и тесе ыйтрё, анчах хирёç сăмах натеймерё.

— Николай вилнё... акă çыру, — терё Павăл йулашкинчен, аллинчи çырува сётел çине хурса.

Ку сăмахсене вăл ним пулмăн пек, Николай вилнёне ăна интереслентермен пек аапкăн каларё. Анлё пулин те, кăна илтсен амăшё, аллинчи кашăкне ÿкерсе, сапнун ăрки йарса тытрё. Ашшё шывлё çине пăхса пёр вăхăт чёмсёр ларчё, унтан, васкамасăр, сётел çинчи телеграммăпа хутне кăй аллине илчё.

Павăл каçхи апат çимесёрех сётел хушшинчен кайăла тухрё.

Тепёр кун ирхине вăл хёвелпе пёрлех тăчё. Нимрен малтан Николай ачине уçса ку тараннчен тирпейлё тытса усранă йăналисене пăлхатма пикенчё. Чылай çырусене пăхса тухрё, пёрле ÿкертнёрне сăпкăчёсене хăй çум кăсăпине пустарса чикрё.

Ирхи апат вăхăтенче вăл ашшёпе амăшне хăйён-ёнер каçпах пуçа кёнё шухăшне каласа пачё.

— Терёс, —терё ашшё пуçне суласа, —сан чикё хёррине уй вырăн, не тăмала!

— Йулташу вёт, —терё амăшё те. Вăл тата тем калаçăшшёне пулас, анчах уй куçёсем Павăл куçёсемпе тёл пулчёç те, карчăк чатăмарё, питкурне тутăр кётессипе хулласа хăй ашшёне макăрма тапратрё.

— Ан макăр, —терё ашшё. — Ыйăлу ташманпа тăвăн çёршывăн çапăсса вилнё. Çакна аланлас пулат.

Павăл „тавах ёнре, атте-анне" тенё пек шывланă куçёсемне тепёр хут старикне карчăк çине пăхса илчё. Вăрă апат çийёс вырăнне, сётел хушшине çыру çырма ларчё.

— Ворошилăв патне çыр. Висёнăр йăта та кÿрт, —терё ашшё; ыйăлас умне çăкăр чёлли кассе хурса.



Китай халăхне хирĕç кĕрешнĕ сĕрте Йапони захватчикĕсем çынна вĕлерекен газсемпе усă курăççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Йапонсы йăханшывĕ çинчи çынна вĕлерекен газсем йăнă вырăн. Малта—Йапони самурайĕсем, газпа вилесрен хăраса, противогаз тăхăнна.

(Совъфото).

КИТАЙРИ ВĂРÇА

Центр Китайри Цзўцзайан-Ханькоу чукунçул линийĕнче Китай çарĕсем йапонĕнсене хирĕç çав тери хыттăн тăрса вăрçаççĕ. Вăл районта хăйăр çăнăçусем пырăççĕ. Йапонĕнсем Таньзайачженран çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтăхăç ĕнче Китай позицисем çине атакăсем туса пырăççĕ.

Лучжоу—Синьйан шоссе çулĕ патĕнче Китай çарĕсем йăнăслăн контрнаступлени туса Йапони отрйачĕсене хĕссе лартнă. Йапони отрйачĕсем Синьйан çине тапăнса пынă.

Нанькан районĕнче китайĕсем Йапони колоннине йăлтах çĕмĕрсе тăкнă. Йапонĕнсем, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен 800 çынна йăхăн пĕтнĕ. Китайĕсем кунта вăрçă хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ. Цзўцйанран кăнтăр-хĕвелтăхăç ĕнче, Жуйчан—Уинь шоссе çулĕ çинче китайĕсем Йапонин икĕ колоннине пĕтерсе тăкнă.

Ку районта Йапони çарĕсен ĕçĕсем пиртех те начарринне курса, Йапонь командованийĕ кунта çĕнĕ чăсене илсе пырать.

(ТАСС).

Полъшă тата Мӳнхĕнри конференци решенийĕ

Тăвată державăн Мӳнхĕнри конференцийĕн итогесем Полъшăри официалла çынсене хытă кăмăлсăрлантарнă. Полъшăпа Венгри хăтăвĕсем тăрăх Мӳнхĕнре йышăннă решение—интересленекен йенсене хăйсен тавлашулă ыйтăвĕсене тӳрремех йĕркелесе йăма вырсĕ уйăхă срук пăракан решение пĕтĕм правительствă пичĕпе йуратмасăр, çивчĕн критиклет. Полъшă правительствин хăçачĕ „Газета польска“ çапла чăрсăрланса çырать: „Полъшă правительстви пурпĕрех государствă интересĕсĕнчен тухса тăракан тата Полъшă интересĕсемпе йăлтах килĕшсе тăракан позици йышăнĕ. Полъшă требованийĕсем пурнăçа кĕме тивĕç тата вĕсен пурнăçа кĕрĕç те. Кун пирки никам та ан иккĕлентĕр“.

(ТАСС).

Инди—Чехословакипе пĕр шухăшлă

Пĕтĕм Индири конгресăн председателĕ Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш патне телеграмма ăстăнă. Вăл телеграммăра çапла каланă: пĕтĕм Индири конгрес хăйĕн никама пăхăнмасăр пурăнас ирĕкне татăкланах хӳтлеме тата Чехословаки халăхĕпе пĕр кăмăлла пулса тăрать,—тенĕ.

(ТАСС).

Йут çĕршывсенче

** Шанхайра Йапони влăсĕсем Корейă революционерне Бо Кухена арестленĕ. Вăл Корейă никама пăхăнса тăмасăр - пурăннама тăвасшăнăн чылай çулсем хушши керешнĕ. Йапони суче ăна вĕлерме суд туна.

** Çĕнтăбĕрĕн иккĕмĕш вунăкунăлăнче Полъшăра çăкăр, ашкăкай, кĕрпе тата ытти продуктăсен хакĕсем 8—10 процент хаклăнă.

** Германири Галле хулинче çĕнтăбĕрĕн 29-мĕшĕнче икĕ рабочине вĕлермĕпе суд туна. Вĕсене 19 çул хăйрах революцине вооставшине тĕсе айăпланă.

** Швеции „Клеопатра“ йăтлă пăрахутне çинчи команда забастовкă туна. Командă Испанири пăлхавăсем валăри нефтепродуктăсем турттарма пăрахнă.

*** Америкăра тăвата моторлă çĕнĕ самолъот туса кăларнă. Самолъот 42 сынна, хăйĕн çинчи пилĕк çынна тата виçĕ тонна çурă груза илсе хăнартма пултарать. Самолъот хăвăртлăхĕ—сехетре 385 километр, 7.500 метр çӳлеле хăпарма пултарать. Кунсăр пуçне—3.500 километр чухлĕ инçете вĕçет.

(ТАСС).

„Родина“ самолъот çинчен пĕлтерни

Çĕнтăбĕрĕн 30-мĕшĕнче „Родина“ самолъот ăстине тупайман. Ăна халĕ те шыраççĕ-ха.

(ТАСС).

Украинăра çĕр пин йединоличник колхозсене кĕнĕ

Украинăри колхозниксен пуйан пурнăçĕ татти-сыпписĕр ӳсее пынине кура йединоличниксем колхозсене çĕнĕрен пит нумай кĕреççĕ. 1938 çулăн пĕрремĕш çурçулĕнче республикăри йединоличниксем 100 пин хуçалăх ытла колхоза кĕнĕ.

(ТАСС).

Совет Сойузĕ тăрăх

* „Круг“ колхоз (Мензелинск р., Тутар АССР) кăсалхи çул йĕтĕн акса туса 200 пин тенкĕ доход илет. Колхоз вăтам шутпа гектар пуçне 4-шар центнĕр йĕтĕн сӳсĕ туса илнĕ.

* Çĕнтăбĕрĕн 30-мĕшĕнче Киĕв-Полтавăпа Молăтавски районра противогазсем тăхăнса массăлă походсем туса иртернĕ. Похода 9 пин çынна йăхăн хутшăннă, вĕсем Киĕв-Сыйатошино маршрутпа 18 километр утса тухнă.

* Çĕнтăбĕрĕн 30-мĕшĕнче вăрçăлă турăсăрсен союзĕ С. М. Кирăв йăнăпе тăракан куçтурăпа кăна тĕп паркĕнче калăма çук пысăк массăлă гуляни организацилене, унта Ленинградри ĕççыннисем 50 пин çын ытла пуханнă. Паркăн тĕрлĕрен кĕтесĕсенче тĕне хирĕçле темăсемпе калаçусем, лекцисем туса иртернĕ.

(ТАСС).

Осоавиахим организацин ĕçĕсем

Шупашкарти йăлтăçăлăх рабфакĕ çуменчи Осоавиахим пуçламĕш организацийĕ йăлашки вăхăтра лайăх ĕçлеме пуçларĕ. Организаци председателĕ Иван Куланăв Осоавиахим ретне çĕнĕ членсем хутшăнтарассине тăрăшса ĕçлет. Рабфакра пурĕ 110 çын вĕренеççĕ, вĕсенчен 100 студент Осоавиахим членĕнче тăрассĕ. Киĕв билетсене улăштарса пĕтернĕ. Кăçал вĕреме килсе кĕнĕ студентсене 50 çынна çĕнĕрен члена илчĕç.

Осоавиахим членĕсем оборонă значкисĕсен нормисене пама хатĕрленеççĕ. Пайанки куна 43 çын ПВХО, 45 çын ГСО значкисĕсен нормисене парса значкосем илчĕç.

Рабфак çуменчи Осоавиахим организацийĕ йăлтăçăлăх институчĕ çуменчи организацине ăмăртса ĕçлет. Ленинăл-сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйăх тĕлне кашни Осоавиахим членĕ ПВХО, ГСО значок нормине тата 25 çын „Ворошиловский стрелок“ значок нормине пама обязательствă илчĕç, Студентсем хушшинче тĕнчери лару-тăрăсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ. Кашни общежитинче виçшер хут калаçусем туса иртернĕ. Уроксем пуçланиччен кашни кун политинформацисем пулаççĕ. Совхозăнăла урамри общежитинче йăтарлăса „Хăсан кӳлли патĕнчи тытăсу“ çинчен икĕ хутчен калаçу туса иртернĕ.

Ан. Иванов.
Й. Сигайĕв.

Хаçат-журнал сарас ĕçе вăйлатмала

Йĕпреç районĕнче массăсем хушшинче хаçат-журнал сарасси тата вĕсене подписчиксем патне çитересси кирлĕ пек пулса пымасть. Ку тĕлĕшпе сыхăну пайĕ (начальникĕ Йăкавлĕв) тата Сойузпичет уйрăмĕ (Светлов) начар ĕçлеççĕ. Вĕсем почтă агентĕсемпе почтальйонсен ĕçне болъшевикла организацилемен.

Çапла Ентрийалĕнчи почтальйон Михайлăв иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче 400 тенкĕлĕх хаçат-журнал сарнă та, унтанпа никама та пĕр экземпляр та çырăнтарман. Вăл ĕçлекен икĕ йăла хаçат мĕн пурĕ те 29 экземпляр çеç пырса тарать. Ку ĕнтĕ Михайлăв хаçат-журнал сарас тесе нимĕн те ĕçлеменнинчен килет. „Манăн кил тăрăх хаçат-журнал сарса çӳреме вăхăт çук“, тет вăл.

Вырăс Тимеш йăлсоветĕнче те çавнашкалах. Кунта почтальйон Малышĕв. Хаçат-журнал йăлсоветĕнче те 22 экземпляр çеç пырса тарать. Çавăн пекех Кĕçĕн Патăрйăлĕнче те (почтальйон Ветеринарав), Çĕрпелĕнче те (Семенав) ĕçсем начар.

Асăннă йăлсоветсенче хаçат-журнал сарас ĕç начар пынишĕн йăлсоветсемпе колхоз председателĕсемпе йăлсовет председателĕсем, парторгсемпе комсоргсем хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, почтальйонсене ĕçре пулăшмаççĕ, вĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлекен почтальйонсенчен: Çĕнĕ Мăртри—Андрийанăв, Хымри Выçлинчи—Майков, Çирĕклĕри—Максимăв, Клешкассинни—Васильев, Хумпуç Патăрйелĕнчи Афанасьĕв йăлташсене илсе кăтартма пулать. Вĕсем хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе темиçе çул хушши ентĕ кăтартăлă ĕçлесе пыраççĕ. Почтальйонсен çĕнтăбĕрĕн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ районри канашлăвĕнче вĕсене премипа пачĕç. Çак почтальйонсен опычĕсем пример пулмала.

Районра тухакан „Колхоз пурнăçĕ“ хаçата сарас ĕç пушшех те йăнăх. Çак ĕнĕпе уйрăмăнах Хурамал (начальникĕ Константинав), Çĕнĕ Чураш (Иванов) сыхăну уйрăмĕсем начар ĕçлеççĕ.

Йĕпреç районĕнчи почта уйрăмĕсенче хаçат-журнал сарас ĕçе хакламасăр тăрас йăлана татăклах пĕтермелеç.

Дм. Михайлăв.

Вите çуменчи парикмахерски

Хĕрлĕ Чутай район центрĕнче кăçалччен те парикмахерски пулман. Кăçал Хĕрлĕ Чутай райĕстăвкомĕн сывлăх пайĕ район центрĕнче парикмахерски çума шут тытнă. Çуçнă та. Анчах ăста çуçнă—ун çинчен малала калаçа парăпăр.

Парикмахерски—Владимир Осипăвич гражданинăн килкартине вырнаçнă. Вите çумĕ. Алăк хыçне таса мар улăм куплалать. Çак улăм купи сийĕнче кускĕски, одеколонсем, пудрăсем тăрассĕ.

Улăм купийĕнче йăнашар—ларса хырăнмали пукан. Пуканĕн пусса ларманни çук - пирки хырăнакаи урисене улăм ăшне чиксе ларать.

Çакăн пек ĕнтĕ Хĕрлĕ Чутайри халь çеç уçнă „вĕрçĕнĕ“ парикмахерски. Хырăнна кунта ватти çынсемпе пĕрлех, районри сывлăх пайĕн пуçлăхĕ Моисейĕв йултеш та çӳрет. Питех те кăмăлла пек туйăнат пулĕ Моисейĕва шăршла витепе йăнашар-ларса хырăнма!...

Парикмахерски вите çуменче, таса мар улăм купийĕнче йăнашар-ларса хырăнмали пукан. Пуканĕн пусса ларманни çук - пирки хырăнакаи ваъăн кулътурăлă çурт тупса пама тăрăшмалах.

Ив. Чирков.

Чемейри колхоз клубĕнче

Чемей йăлĕнче (Тутаркас районĕ) чиркĕве пăсса кулътурăлă çĕнĕ клуб туса лартрĕç. Клубра библиотекă пур.

Библиотекăран час-часах кĕнекесем илсе вуласа тăракансен йышĕ 300 çынна çитет. Клуб çумĕнче колхоз çамрăкĕсен тĕрлĕрен пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Драмкружок çак уйăрза виçĕ хутчен спектакăль лартса пачĕ.

Учительниц Трофимăва йăлташ йĕртсе пынине ачасен хорĕ вечĕрсенче тĕрлĕрен йăрăсем йăрласа парат тата уйрăм ачасем сăвăсем тухса каласçĕ.

Йăлашки вăхăтра лартнă спектакăльсенчен уйрăмăнах Осипăвăн „Айдăр“ пиесси курăкансен кăмăне çĕклентерчĕ. Выльăхсенчен Немăвăна Йегорăн йăлташсем хăйсен театр ĕçĕнче чăнлăпех те пултарулăхлă пулнине кăтартса параççĕ.

Д. Гаврилăв.

Драмкружоксем ĕçре

Шупашкарти строительстăйри çамрăксен хушшинче художествăлă пултарулăх ӳсет пырат. Пушă вăхăта çамрăксем пĕрлешĕлле те савăнăçла иртерме тăрашаççĕ. Кунта икĕ драмкружок организацилене. Пĕр кружок вырăсла, теприн чăвашла ĕçлеççĕ.

Сентябрĕн 23-мĕшĕнче драмкружок вырăсла „Долой маску“ йăтлă спектакăль лартса катартрĕ. Çĕнтăбĕрĕн 24-мĕшĕнче чăвашла „Йĕпе çине сапа“ йăтлă пĕр пайăла комедине вылăса пачĕç.

Куракансем спектакăльсĕне питĕ кăмăлла пулчĕç. Кружок членĕсенчен çакăн пек постановкăсене часчасах лартса пама ыйтаççĕ.

В. Дмитрийев.

Тĕнчери лару-тăру çинчен ăнлантараççĕ

Вăрман Йĕнĕпуçне (Шăхасан р.) çамрăксен пухăвĕсем час-часах пулса пыраççĕ. Вĕсенче Китайри, Испанири вăрçă çинчен, Чехословакири лару-тăру çинчен ăнлантарса параççĕ.

Н. Иванов.

Ватă стахановĕсем

Н. Шăхаль (Турхан р.) йăлсоветне кĕрекен „Совет“ колхоз кăçалхи çул уй-хир ĕçĕсемпе районра малти ретре пычĕ. Колхозра çамрăксемпе ватă колхозниксем те ăмăртса ĕçлерĕç. Акă, С. Пагунăв тата А. Начальниковăй йăлташсем 70 çула сывлăраççĕ. Çапла пулсан та вĕсем пĕр ĕçрен те йăлман, йăланах стахановăла ĕçленине хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пынă. Пагунăв пĕр пĕччен 30 пăт тĕштăр, 70 тенкĕ укçа; А. Начальниковăй 38 пăт тырă, 87 тенкĕ укçа илет.

И. А.

„Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммунĕ“ хаçатсен призне илмели естафетлă чупу положенийĕ

1. Чупу Шупашкарта октябрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртет.

2. Естафетлă чупăва хутшăнма физкулътурăпа коллективĕ йе спорт обищĕствин 15 сынтан тăракан командă тăратăр, çав шутра арçынсем 10 çын, хĕрарăмсем 5 çын пулмала.

3. Кашни коллектив хăй мĕн чухлĕ команда кăларас тет, çавăн чухлĕ кăларма пултарать, сборнăй командăсем тума та ирĕк пур.

4. Естафетлă чупăва Шупашкар хулинчи пур коллективсем те хутшăнма пултараççĕ (арçынсем 18 çултан çамрăк мар, хĕрарăмсем 17 çултан çамрăк мар пулмала).

5. Естафетлă чупура арçынсен 10 çынăн 1.200 метр, хĕрарăмсен 5 çынăн 700 метр чупмала.

6. Естафетăра чи сахал вăхăтра чупса тухакан арçынсен тата хĕрарăмсен командисем пĕрремĕш вырăна йышăнаççĕ. „Красная Чувашия“ тата „Чăваш Коммуне“ хаçатсен кусса сӳрекен призне илме права илеççĕ.

7. Чупăва хутшăнма зайавкăсене оргкомитета (физкулътурăпа спорт ĕçĕсен хула комитетне) октябрĕн 11-мĕшĕнчен кайа йăлмасăр памала. Чупăва хутшăнакансен списокне врачăн çирĕплетмелеç. Старт вăхăтĕнче командăсен составне улăштарма ирĕк памаççĕ.

8. Кашни командăн спорт формине пулмала (майка йе футболка, трусисем, йĕлтĕр йе спорт брюкисем те йураççĕ). Какăр çинче тивĕçлĕ командăн номерĕ пулать.

9. Старт тата финиш, çавăн пекех естафетă парасси Хĕрлĕ площăдĕре, трибуна тĕлĕнче пулать.

Арçынсен маршручĕ: старт—Хĕрлĕ площăдь—Союзная урамĕ—Атăл хĕрринчи урам—Роза Люксембург урамĕ—Хĕрлĕ площăдь.

Хĕрарăмсен маршручĕ: Хĕрлĕ площăдь—Союзная урамĕ—Чернышевски урамĕ, Роза Люксембург урамĕ—Хĕрлĕ площăдь.

Оргкомитет.

Пулни-иртнисем

● Шупашкар çынни (Нагорнайа, 32) Н. И. Логинăв автомашина гаражĕсенче ĕçленĕ хушăра унти запаспа пайсене тустарса пуранă. Унăн килĕнче хутарса пăхсан, унта автомашинăсен пайĕсен запасне нумай тупнă. Вĕсене вăл пысăк хакпа сутма хатĕрлесе хунă пулнă. Логинăва арестленĕ, ĕçе пăхса тухма суда парасçĕ.

● Çĕнтăбĕрĕн 25-мĕшĕнче Шупашкар хула совечĕн ремонт мастурĕн кладовщикĕ А. Ф. Йăрушин милици управленине пырса, çĕнтăбĕрĕн 22-мĕшĕнче, Дементюна тата Рычковпа пĕрле ĕçне чухне, вĕсем ăна хĕнесе портфĕлне тортса илни çинчен пĕлтернĕ. Портфĕлре документсем, 800 тенкĕлĕх облигацисем тата ытти пулнă, тенĕ. Терĕслесе пăхсан, Йăрушкин калани суйа пулнă. Портфĕлне унăнне никам та намĕн, ăна вăл ӳсĕрне хăй таçта сухатнă пулнă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Чăваш древпроменабсбыта
йăланлăх ĕçлеме
оперативлă пайăн бухгалтĕрĕ, вак суту-илу ĕçĕн бухгалтĕрĕ, 2 çын счетовод-картотетчик, счетовод-кассир, калъкулятăр
КИРЛЕ.
Ĕçукçинне государствăпа нормированнăй тăрăх тулеççĕ.
Çак адрĕсне ыйтса пĕлмелĕ: г. Чебоксары, ул. Кадыкова, 7. Чувашдревпромснабсбыт.
2—3

Варвиттилĕ тиф чирĕ

Варвиттилĕ тиф—пĕр сыпăран тепĕр сыпăна хăвăрт вĕрекен чир.

Унпа 15 çултан пуçласа 25 çула ситичченки сынсем ытларах чирлеççĕ, çавăн пекех ӳкĕ чир ватă сынсемпе ача-пăчасене те вĕрме пултарать. Варвиттилĕ тиф чирĕ микробсĕнчен пуçланса кайат. Çак микробсем писсе ситмĕн тасамар апатсимĕс çинче йĕ тасамар чĕре шывра, етем утăмĕнче çуменчи тасамарлăхра, тата тирпейсĕр чашăк-тирĕк çумĕнче пулма пултараççĕ. Кунсăр пуçне сĕт-çу, турăх, ӳкат, тĕрлĕрен пахча-çимĕç çумĕнче те пулаççĕ.

Хăвăн та пулин пĕрре варвиттилĕ тифпа чирленĕ сынсенчен хăш-пĕрисем, хăйсем чирле мар пулин те çак чире сӳлте асăнă тасамарлăхсем урлă ытти сынсем хушшине тарма пултараççĕ. Куçа пеккине БАЦИЛЛОНОСИТЕЛЬ йĕ бацилловыделитель теççĕ.

Çапла вара варвиттилĕ тиф чирĕ шыв ĕссем (сывлăмăш йухăн шыва йĕ пусăран ирсерен каштах кайăрах та пулат. Чир асăнă шыва вĕретмесĕр ĕссем); тĕрлĕрен апат-симĕсрпе писсе ситмĕн апăкаий, çуса тасалман пахча-çимĕçпе сĕт-турăх, чăвăх тăвраппсем урлă сынсене пулаторат. Çак чирĕ сарас ĕçре шăнасем инкĕ-пысăк пырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем тĕрлĕрен тасамарлăх çине йăрса, кусса сӳрсе чире сараççĕ.

Чир—чирленĕ сынран сарăлат пулсан, кунта тĕлĕн-тĕлĕн чирлекенсем пулкалаççĕ. Тасамар шыв урлă чир сарăлат пулсан, паллах, çак шыв ĕссе пурăнакансем, харăсах чылайăн чирлеççĕ. Апат симĕс ĕе тата ытти тасамарлăх пирки сахăлах чух тĕлĕн сăхал ушкăнăн чирлеççĕ.

Варвиттилĕ тиф микробĕсем малтанах варкăрăмра вырнаçасçĕ, унта вара вĕсем питĕ хытă хуçаççĕ.

Сын ăшне çак микробсем лекесси сийĕнчех сын чирлемест. Етем ним ыратмасăрах 2—3 талăкран пуласа 2—3 ерне хушшин те сӳреме пултарат. Чир йĕрни ака мĕнпĕри сисĕнме пуçлат: малтанах сăн-сӳрăма сарăлтаттарат, сӳçентерет. вăл çук пек туйăнат, йăвăрлантарат, ĕçлес килмест, пуç ыратькалат, шăм-шак та кăштах тата ыратни пек туйăнат, сывăрах шиннче тарма пултарасçĕ. Кун пекк